26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ЙЮЛĔ
27
ЫТЛАРИКУН
150(6387) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

Выльăх-чĕрлĕх тата лашасем ĕрчетес тĕлĕшпе районсем хушшинче пыракан социализмлă ăмăртăвăн 1943 çулхиултă уйăхри итогĕсем çинчен

Выльăх-чĕрлĕх тата лашасем ĕрчетес тĕлĕшпе районсем хушшинче пыракан социализмлă ăмăртăвăн кăçалхи ултă уйăхри итогĕсене пăхса тухса, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ çапла йышăннă:

Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх тата лашасем ĕрчетес тĕлĕшпе районсем хушшинче пыракан социализмлă ăмăртура, 1943 çулхи ултă уйăх хушшинче, Элĕк районĕ çĕнтерне тесе йышăннă. Элĕк районĕнчи колхозсенче çав вăхăт хушшинче лашасен хисепĕ 5,5 процент, ĕне-выльăхсен йышĕ—19,9 процент, сыснасен йышĕ—28,7 процент, сурăхсен йышĕ 33,8—процент чухлĕ ӳснĕ. Элĕк районĕ çавăн пекех выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлемелли плана та ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырать.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Ишлей районĕнчен илсе Элĕк районне панă.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе районри малта пыракан çынсене премилеме Элĕк райисполкомĕн аллине 6000 тенкĕ укçа памалла тунă.

Выльăх-чĕрлĕх тата лашасем ĕрчетес тĕлĕшпе Çĕрпӳ, Вăрнар, Калинино, Ишлей, Красноармейски, Сĕнтĕр, Шупашкар тата Шăхасан районĕсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Çĕрпӳ районĕн руководителĕсене çакăн пирки асăрхаттарнă: Çĕрпӳ районĕ, колхоз фермисенче выльăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстермелли плана пурнăçлас тĕлĕшпе лайăх тĕслĕхсем кăтартнăскер, Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме пултарнă, анчах район государствăна аш-какай тата ытти тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парас тĕлĕшпе ытти районсенчен питех те кая юлнă пирки, куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава илес тивĕçлĕхе çухатнă.

Ирĕке тухнă районсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатма пулăшар

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем хăйсем тытса илнĕ территори çинче пĕтĕм хуçалăха çаратса, ишĕлтерсе пĕтереççĕ. Колхозниксен тата колхозсен çурчĕ-йĕрĕсене çунтарса яраççĕ, выльăхсене пусса тата вĕлерсе пĕтереççĕ. Нимĕç варварĕсем пулнă вырăнсенче пур çĕрте те хуласемпе ялсем çĕмĕрĕлсе пушанса юлаççĕ.

Хĕрлĕ Çар нимĕç тискер кайăкĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешет. Совет вунăшар хулисемпе ялĕсене нимĕç пусмăрлăхĕнчен хăтарса ирĕклĕ пурнăç çулĕ çине кăларать. Çав ирĕке тухнă районсенчи колхозсемпе колхозниксене тата рабочисене хăйсен хуçалăхне ура çине тăратма пирĕн пĕтĕм çĕршыв пулăшать.

Икĕ уйăха яхăн каярах Иваново облаçĕнчи Родниковски районри Острецоври Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем калама çук паха пуçару турĕç. Вĕсем Смоленск облаçĕнчи „Вперед к социализму" колхоза шефа илсе ăна выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пулăшма сăмах пачĕç. Острецоврăри колхозниксем Совет Союзĕнчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене хăйсен пуçарăвне йышăнса илме чĕнчĕç.

Совет Союзĕнчи мĕнпур колхозсемпе пĕрле, пирĕн республикăри колхозсем те острецовецсен чĕнĕвне хапăл туса йышăнчĕç. Нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă колхозсемпе колхозниксене пулăшма планран иртерсе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç хĕрӳллĕн пуçланчĕ. Вăрнар районĕнчи колхозсемпе колхозниксем Сталинград облаçĕн ирĕке тухнă колхозĕсене пулăшма 80 ĕне, 200 сысна, 200 сурăх уйăрнă. Калинино районĕнчи колхозсемпе колхозниксем 48 ĕне, 106 сысна, 103 сурăх; Ишлей районĕнчи колхозсем 44 ĕне, 77 сысна, 118 сурăх, 848 чăх-чĕп уйăрнă. Етĕрне, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕр тата ытти районсенче те ирĕке тухнă районсенчи колхозсене пулăшма чылай выльăх-чĕрлĕх уйăрнă. Нимĕç захватчикĕсенчен сиен курнă колхозсене пулăшма республикăра пĕтĕмпе, туллимар даннăйсем тăрăх, 552 ĕне, 1609 сысна, 1338 сурăх, 1723 чăх-чĕп уйăрнă. Чылай районсенчи колхозсемпе колхозниксем çак выльăх-чĕрлĕхе „Заготскот" конторисене панă та ĕнтĕ.

Пирĕн колхозсен çак лайăх ĕçĕ ирĕке тухнă районсенчи колхозниксене савăнтарать. ВКП(б) Сталинград Обкомĕн секретарĕ Рунаев юлташ çапла çырса пĕлтерчĕ:

„Пичетри хыпарсем тăрăх, эпир Чăваш республикинчи колхозсем пирĕн облаçри ирĕке кăларнă районсенчи фермăсене ура çине тăратма выльăх-чĕрлĕх уйăрса пани çинчен пĕлтĕмĕр. Нимĕç оккупацинчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозниксемпе колхозницăсен ячĕпе, Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсене вĕсем пирĕн колхозсен хуçалăхне ура çине тăратас тесе тăрăшнăшăн тав тăватпăр".

Острецово колхозникĕсем пуçарнă патриотла ĕç кунсеренех сарăлса пырать. Колхозсен фермисем ирĕке тухнă районсем валли планран иртерсе тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕх ӳстереççĕ. Нумай колхозниксем хăйсен хуçалăхĕнчи выльăх-чĕрлĕхрен хамăрăн тăвансене пулăшма сыснасем, сурăхсем, чăх-чĕпсем уйăрса параççĕ.

Çак паха ĕçе пирĕн кунран-кун вăйлатса пырас пулать. Ирĕке тухнă районсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатмашкăн пирĕн кашни колхозах май пур таран выльăх уйăрса пама пултарать. Планран иртерсе мĕн чухлĕ те пулин выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме кашни ялхуçалăх артелĕнех вăй çитет. Çакна тăвас тесен, çамрăк выльăхсене пурне те сыхласа усрани, выльăхсем валли çителĕклĕ апат хатĕрлени, вĕсене хĕл каçарма лайăх хатĕрленни кăна кирлĕ.

Анчах республикăра çак ĕç çителĕклĕ пулса пырать тесе калама çук-ха. Хăшпĕр колхозсен руководителĕсем çак ĕç çине кĕске вăхăтлă кампани çине пăхнă пек пăхаççĕ. Вĕсем Острецово колхозникĕсен чĕнĕвне сӳтсе-явнă хыççăн ун çинчен манса кайма та ĕлкĕрнĕ. Çакă тĕрĕс мар. Ирĕке тухнă районсенчи колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе ура çине тăратасси вăл—темиçе çула пыракан ĕç пулса тăрать, вăл кĕске вăхăтра тата çăмăллăн пулса иртекен ĕç мар. Çавăнпа та, нимĕç захватчикĕсенчен сиен курнă колхозсемпе колхозниксене выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме пулăшас тесе, пирĕн нумай вăхăт хушши, куллен тата çине тăрса ĕçлесе пымалла.

Партипе совет организацисен хисеплĕ тивĕçĕ вăл—Острецово колхозникĕсем чĕнсе калани çине ответлесе йышăннă обязательствăсене чыслăн пурнăçлама колхозсене пулăшасси, çак ĕçпе куллен интересленсе ертсе пырасси пулса тăрать.

Ирĕке тухнă районсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе ура çине тăратма пулăшар! Ирсĕр нимĕç захватчикĕсенчен сиен курнă хамăрăн тăвансене выльăх-чĕрлĕхле пулма пулăшас тесе, мĕн тума пултарни-не пурне те тăвар!

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

В. С. Обухова тата В. Р. Романова Чăваш АССР-ĕн тава тивĕçлĕ врачĕн ятне парасси çинчен

Совет çĕршывĕнчи сывлăха сыхлас ĕç 25 çул тултарнă май, сывлăха сыхлас ĕçре тухăçлăн ĕçленĕшĕн тата питех те палăрса тăракан тава тивĕçлĕ çитĕнӳсем тунăшăн Чăваш АССР-ĕн тава тивĕçлĕ врачĕн ятне çаксене парас:

1. Василий Степанович Обухова—Чăваш республикинчи парти актив стационарĕн главнăй врачне.

2. Василий Романович Романова—Шупашкарти ача-пăча поликлиникин куç врачне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕн ĕçĕсене тăвакан
А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулхи июлĕн 21-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 24-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 24-мĕшĕнче пирĕн войскăсем ОРЕЛ енче наступлени туса пынă тата, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, 5—8 километр малалла куçнă, халăх пурăнакан чылай пунктсене йышăнса илнĕ, вăл шутра ЗМИЕВКА ятлă район центрĕ тата чугунçул станцийĕ.

БЕЛГОРОД енче пирĕн войскăсем, 5 кун хушши наступлени туса, нимĕçсен фашистла войскисем наступлени тума пуçличчен, урăхла каласан кăçалхи июлĕн 5-мĕшĕччен, хăйсем йышăкса тăнă вырăна пĕтĕмĕшпех каялла таварнă.

Кăнтăрта, Донбасра, ИЗЮМРАН КĂНТĂРАРАХРИ тата ВОРОШИЛОВГРАДРАН КĂНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇНЕРЕХРИ районра пирĕн войскăсем вырăнти çапăçусем туса пынă.

КРАСНОДАРТАН КĂНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇНЕРЕХРЕ пирĕн войскăсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе вырăнти атакăсем туса пынă

Июлĕн 23-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче пирĕн войскăсем нимĕçсен 43 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата артиллерирен персе мĕнпур фронтсенче тăшманăн 94 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Орел енче пирĕн войскăсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе тата унăн контратакисене сире-сире пăрахса, малалла наступлени туса пынă.

Орелран çурçĕререхре тăшман, пирĕн тапăнса пыракан войскăсене чарса лартма хăтланса, темиçе хутчен те контратака тунă. Пирĕн чаçсем гитлеровецсен контратакисене пурне те сирсе пăрахнă, малалла куçса, тăшманăн тĕреклетнĕ чылай пункчĕсене йышăнса илнĕ. Пĕр соединенин чаçĕсем, халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илсе, нимĕçсен 9 танкне, 6 радиостанцине тата перекен хĕçпăшал нумай тытса илнĕ. Тытăнса илнĕ нимĕç салтакĕсем вĕсен подразделенийĕсене çапăçу пынă вырăна транспорт самолечĕсемпе куçарса килни çинчен пĕлтернĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем, каялла чакакан нимĕçсене хăваласа пырса, тăшманăн 6 йывăр танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă тата нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

Орелран хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем, наступленилле çапăçусем туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсем, авиацийĕсемпе усă курса, совет войскисем малалла куçнине чарса лартасшăн. Пирĕн авиацин пысăк соединенийĕсем тăшмана хирĕç пыра-пыра çапаççĕ. Кункаçиччен нумай хут сывлăшра çапăçусем пулса иртнĕ. Пĕр чаçри летчиксем кăна нимĕçсен 36 самолетне персе ӳкернĕ. Пирĕн войскăсем кункаçиччен çапăçса, нимĕçсен 2000 çити салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, 27 орудин, вăл шутра хăй тĕллĕн куçса çӳрекен 3 орудин, пулеметсем, автоматсем нумай тата боеприпассен складне тытса илнĕ.

Орелран кăнтăрарахра пĕр соединенин чаçĕсем, малалла куçса, халăх пурăнакан 18 пункта йышăнса илнĕ. Халăх пурăнакан çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче нимĕçсен 1000 çити салтакĕпе офицерне вĕлерсе тăкнă. Педоренко лейтенант командир пулса ертсе пыракан автоматчиксен подразделенийĕ тăшманăн тылне сăрхăнса кĕнĕ. Пирĕн боецсем нимĕçсен пехотнăй полкĕн штабне çĕмĕрсе кĕнĕ те 60 çити гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ, вĕсен шутĕнче офицерсем нумай пулнă.

* * *

Белгород енче пирĕн чаçсем, нимĕçсем çине штурмлакан ушкăнсемпе тапăнса, тăшмана вăйлăн çирĕплетнĕ позицисенчен хĕссе кăларнă. Пĕр гвардейски часть, халăх пурăнакан пункта йышăнса илсе, 200 гитлеровеца тата тăшманăн 12 танкне пĕтерсе тăкнă. Кĕçĕн лейтенант Иванов ертсе пыракан штурмовой группа çĕрле нимĕçсен позицийĕсем патне сăрхăнса кĕнĕ. Тул çутăласпа красноармеецсем тăшман траншейисене кĕтмен çĕртен çĕмĕрсе кĕнĕ те тăшмана хăваласа янă.

* * *

Изюмран кăнтăрарахра пирĕн чаçсем вырăнти çапăçусем туса пынă. Совет артиллерисчĕсем нимĕçсен 20 дзотне ишĕлтернĕ, тăшманăн артиллерипе минометсен 15 батарейине пусарса лартнă. Пĕр участокра контратака тума тытăннă нимĕç пехотине пирĕн артиллери вут çулăмĕ шăлса пăрахнă. Гитлеровецсен 2 батальонне пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра совет подразделенийĕсем, тăшманăн 4 контратакине сирсе пăрахса, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Çав çапăçусенче 400 çити гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 257-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 475-мĕш гренадерски полкран 37 нимĕç салтакĕ Хĕрлĕ Çар енне куçнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн гвардейски подразделени тăшман траншейисене çĕмĕрсе кĕнĕ те унта хирĕç тăнă нимĕçсене вĕлерсе пĕтерсе, хăйсем тытса илнĕ рубежра çирĕпленсе ларнă. 12 пулемет тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн разведчиксем тăшман вырса тăнă вырăна çĕрле ăнăçлăн шыраса пăхнă. Совет боецĕсем, гитлеровецсен ушкăнне пĕтерсе тăкнă та нимĕç салтакĕсене тыткăна илсе хăйсен чаçне ăнăçлăн таварнă.

* * *

Гомель облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен танксемпе орудисем турттарса пыракан 2 эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Гитлеровецсем чугунçула вагон çĕмрĕкĕсенчен, сиенленнĕ танксемпе орудисенчен талăк хушши ытла тасатнă. Тепĕр чугунçул çинче «Большевик» ятлă отрядри партизансем минăсем лартса нимĕçсен çар поездне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Нимĕçсен 102-мĕш пехотнăй дивизийĕн пĕр полкĕнчен Орел районĕнче Хĕрлĕ Çар енне куçнă фельдфебель Людвиг Н. çапла каласа панă: «Нимĕç войскисем наступлени туса пынă малтанхи кунсенче офицерсем салтаксене: Курск районĕнче вырăс войскисене çавăрса илесси вĕçне пырать, тесе ĕнентеретчĕç. Анчах часах эпир Курск çине наступлени туни путланса ларнине ăнланса илтĕмĕр. Унтан вырăссем наступлени пуçласа ячĕç. 102-мĕш дивизин чаçĕсене хăйсем йышăнса тăракан рубежсене кирек-мĕнле пулсан та тытса тăма хушнăччĕ. Анчах та пирĕн полк вырăссем хĕснине тӳссе тăраймарĕ, йывăр çухатусем тӳссе каялла чакрĕ. Июлĕн 19-мĕшĕнче каçхине полк командирĕ офицерсене çапла калани эпĕ илтрĕм: «Эпир ĕмĕтленнисем пурте путланса ларчĕç. Пирĕн участокра каялла чакнипе салтаксене фронт линине тикĕслетес шутпа каялла чакнă тесе тивĕçлĕ майпа ăнлантарса памалла», терĕ. Ларутăру шанчăксăррине курах, эпĕ хамăн пурнăçа çăлса хăварма шутларăм та вырăссен аллине тыткăна парăнтăм».

* * *

Нимĕçсем оккупациленĕ Смоленск хулинчен тарса тухнă совет гражданĕсем çапла каласа панă: «Смоленск хулинче пурăнакан çынсем нимĕç захватчикĕсен пусмăрĕ айĕнче икĕ çул хушши асапланаççĕ. Çав вăхăт хушшинче гитлеровецсем нимĕн айăпсăр совет гражданĕсене пиншер çынна асаплантарса тата персе вĕлерчĕç. Гестапо тĕрмисемпе подвалĕсем арестленисемпе тулса ларнă. Гитлерла палачсем уйăхсерен ытларах урса, тискерленсе пыраççĕ. Июль уйăхĕнче нимĕçсен çар влаçĕсем ирĕксĕр ĕçре ĕçлемен хула çыннисене, 14 çултан пуçласа 65 çула çитиччен хисене, пурне те мобилизацилесси çинчен пĕлтерчĕç.

Мобилизациленисене ирĕксĕрлесе Германири каторгăна яраççĕ. Фашистла çынçиенсем ачасене ашшĕ-амăшĕсенчен уйăраççĕ, пĕчĕк ачасене тăлăха хăвараççĕ. Смоленск çыннисем мобилизацирен пур майсемпе те пăрăнса юлма хăтланаççĕ. Халăх тарнине чарса лартас тесе, нимĕçсен çар влаçĕсем, персе пăрахассипе хăратса, çынсене хула тулашне тухма чарнă».

ИЮЛĔН 25-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 25-мĕшĕнче пирĕн войскăсем ОРЕЛ енче, тăшман хирĕç тăнине тата унăн контратакисене çĕнтерсе, наступлени туса пынă, 4—9 километр малалла куçнă, халăх пурăнакан 30 пункта йышăнса илнĕ, вĕсен шутĕнче —РЫБНИЦА, ВОРОНЕЦ, ВЕРХНЕ-ТАГИНО, НИЖНЕ-ГРЕМЯЧЕВО, ЗАХАРОВКА, ЛЕБЕДИХА, ТАГИНО, ГЛАЗУНОВКА станцийĕ тата Орелран — çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, Ока шывĕн хĕвеланăçĕнчи çыранĕнче, ПАХОМОВО, ЧИЖОВКА, НАРЫВКОВО ятлă халăх пурăнакан пунктсем.

БЕЛГОРОД енче—разведчиксем шыраса çӳренĕ тата уйрăм участоксенче вырăнти çапăçусем пулса иртнĕ.

Кăнтăрта, Донбасра, ИЗЮМРАН КĂНТĂРАРАХРИ тата ВОРОШИЛОВГРАДРАН КĂНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇНЕРЕХРИ районсенче разведчиксем вăйлăн шыраса çӳренĕ.

Июлĕн 24-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче пирĕн войскăсем нимĕçсен 64 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе тăшманăн 56 самолетне ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Орел енче пирĕн войскăсем малалла наступлени туса пынă.

Орелран çурçĕререхре пĕр соединени, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе тата унăн контратакисене сире-сире пăрахса, малалла куçнă. Пĕр участокра тăшман вăйлă контратака туса пăхнă. Нимĕçсем çине тăрсах малалла хирĕннĕ, анчах 6 йывăр танк тата, виличисене кăна шутласан та, 700-ре çити салтакĕпе офицерне çухатса, ирĕксĕрех каялла чакнă. Ытти участоксенче гитлеровецсем çавăн пекех темиçе хутчен те контратакăсем туса пăхнă, анчах вĕсене совет подразделенийĕсем персе сапаласа янă.

Орелран хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем, наступлени туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, пĕр соединенири боецсем нимĕçсен 7 танкне персе çĕмĕрнĕ тата 1500 ытла гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Тыткăна нумай илнĕ. Танкăн стрелок-радисчĕ старши сержант Масленников, тăшман контратакине сирсе тăрса, хăйĕн тупинчен персе нимĕçсен «тигр» йышши 3 йывăр танкне çĕмĕрнĕ тата тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 40 çынна вĕлерсе пĕтернĕ.

Орелран кăнтăрарахра пирĕн войскăсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе, малалла куçнă тата нимĕçсене халăх пурăнакан чылай пунктсенчен хĕссе кăларнă. Пĕр чаçри боецсем нимĕçсен 10 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата тăшманăн 600-ре çити салтакне пĕтерсе тăкнă. Пĕр чаçăн подразделенийĕ штурмласа пĕр паха высотана йышăнса илнĕ. Нимĕçсем контратака тунă. Кĕçĕн сержант Кокорезов хăйĕн тупине усă позицие илсе тухнă та тӳрĕ тĕллесе персе тăшманăн 2 танкне, хăй тĕллĕн куçса çӳрекен икĕ орудине пĕтерсе тăкнă. Танксемпе хăйсем тĕллĕн куçса çӳрекен орудисен хӳтĕлĕхĕсĕр тăрса юлнă нимĕç пехоти каялла чакма тытăннă. Пулеметсенчен персе гитлеровецсен пысăк пайне пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн авиаци пехотнăй чаçсене кĕрешӳре активлăн пулăшса пынă, нимĕçсен фашистла войскисем пухăнса тăнă вырăнсене пыра-пыра çапнă. Бомбăсем пăрахса тăшманăн пехотипе техникине нумай пĕтерсе тăкнă. Летчик-лейтенант Владимир Харитонов старши лейтенант Петр Бурмистров штурманпа пĕрле фронт сывăхĕнчи вырăн урлă вĕçсе каçнă чухне çĕр çинче нимĕçсен «Фокке-Вульф—190» йышши самолечĕ ларнине асăрханă та пулеметран персе ăна вут тивертнĕ. Малалла вĕçсе пырса, летчиксем нимĕçсен пирĕн войскăсем çине бомбăсем пăрахма килекен «Юнкерс—88» йышши 7 бомбардировщикне асăрханă. Харитоновпа Бурмистров тăшмана тапăннă та, нимĕçсен 2 самолетне персе антарса, хăйсен аэродромне ăнăçлăн таварăннă.

* * *

Белгород енче вырăнти çапăçусем пулса иртнĕ тата разведчиксем шыраса çӳренĕ. Пĕр чаçăн боецĕсем, хăйсен соединенийĕн флангне хӳтĕлесе тăрса, тăшман пехотипе танкĕсен темиçе атакине сире-сире пăрахнă. Çав çапăçура нимĕçсен 2 танкне, минометсен 2 батарейине тата гитлеровецсене икĕ ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра гварди лейтенанчĕ Никифоров юлташ командир пулса ертсе пыракан красноармеецсен отрячĕ тăшман танкĕсемпе автоматчикĕсен ушкăнĕн контратакине икĕ сехет хушши чарса тăнă. Пирĕн боецсем нимĕçсен 13 танкне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ, тăшманăн 80 автоматчикне вĕлерсе пĕтернĕ. Летчик майор Ольховский кункаçиччен тăшманăн 4 самолетне, старши лейтенант Белоусов вара — нимĕçсен икĕ самолетне персе антарнă.

* * *

Изюмран кăнтăрарахра разведчиксем шыраса çӳренĕ. Ĕнер пĕр соединени тăшманăн темиçе контратакине сирсе пăрахнă, çав çапăçусенче 800-ре çити гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра пĕр гвардейски часть пилĕк кун хушшинчи çапăçусенче хăйĕн позицийĕсене лайăхлатнă, 78 орудин, 89 миномет, 187 пулемет, 8000 ытла винтовка, 5 радиостанци тата ытти трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Калинин фрончĕн пĕр участокĕнче пирĕн разведка тăвакан ушкăн тăшман вырнаçса тăнă çĕре систермесĕр шăвăнса пынă та нимĕçсен траншейисене сасартăк çĕмĕрсе кĕнĕ. Кĕске вăхăт хушши пынă тытăçура разведчиксем темиçе вуннă гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен хĕçпăшалне тытса илсе боецсем хăйсен чаçне ăнăçлăн таварăннă. Тепĕр участокра артиллерирен персе нимĕçсен 3 орудине, 4 пулеметне пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 7 дзочĕпе блиндажне ишĕлтернĕ.

* * *

Ленинград облаçĕн районĕсенчи пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен 223-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 244-мĕш полкăн подразделенийĕсемпе хаяррăн çапăçнă. Совет патриочĕсем 154 гитлеровеца вĕлернĕ тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă. Орудин, радиостанци, автоматсемпе винтовкăсем тытса илнĕ. Тепĕр отрядри Ленинград партизанĕсем июлĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле нимĕçсен 300 кавалерисчĕ вырнаçса тăракан халăх пурăнакан пункта кĕтмен çĕртен пырса тапăннă. Çавăн пек сасартăк тапăннипе нимĕçсем вăйлăн хирĕç тăрайман. Кĕске вăхăтри çапăçура партизансем 100 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 2-мĕш танковăй дивизийĕнчи 2-мĕш танковăй полкран Хĕрлĕ Çар енне куçнă ефрейтор Генрих Л. çапла каласа панă: «Хĕлле, нимĕç çарĕ йывăр поражениесем тӳснĕ чухне, офицерсем пире çапла калаcа йăпататчĕç: «Хăраса ӳкме кирлĕ мар, часах çулла пулать, эпир ун чухне хамăрăнне таваратпăр», тетчĕç. Полк командирĕ—подполковник Бук смотрсем тунă чухне яланах çапла калатчĕ: «Çулла нимĕç çарĕн çав тери пысăк наступленийĕ пуçланать, эпир ун чухне вара вырăссене Сталинградшăн та, Кавказшăн та, пуриншĕн те таваратпăр!» тетчĕ. Çулла пулчĕ. Июлĕн 5-мĕшĕнче эпир наступлени пуçларăмăр. Хаяр çапăçусем пуçланса кайрĕç, çав çапăçусенче пирĕн дивизи питĕ пысăк çухатусем тӳсрĕ. Часах нимĕç çарĕн наступленийĕ арканса кайни паллă пулса тăчĕ. Кунтан та ытларах: вырăссем хăйсем наступлени тума тытăнчĕç те нимĕç хĕçпăшалĕ яланах çитĕнӳ тăвакан сезон пулса тăрать тесе шутланă çуллахи вăхăта вырăссем хăйсем майлă çавăрчĕç. Çакă вара салтаксене питех те хурлантарса пăрахрĕ».

Чăваш ĕççыннийĕсем Верховный Главнокомандующин приказне пысăк хавхаланупа кĕтсе илчĕç

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри пур цехсенче те ĕнер, кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче, кĕске вăхăтлă митингсемпе пухусем пулса иртнĕ. Цехсенчи парторганизацисен секретарĕсемпе агитаторсем рабочисемпе работницăсене Верховный Главнокомандующий Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ Арми генералĕ Рокоссовский, арми генералĕ Ватутин, генерал-полковник Попов юлташсене тата вĕсен войскисене ырă сунса саламлани çинчен тĕплĕн каласа параççĕ.

...Пĕр цехăн хĕрлĕ кĕтесĕнче рабочисем туллиех. Цехри парторганизацин секретарĕ Нерубенко юлташ Сталин юлташăн приказне васкамасăр, пурне те илтĕнмелле вулать. Кашнин питĕнче тулли савăнăç çиçсе тăрать.

— Пирĕн Хĕрлĕ Çар тата чапа тухнă полководецсемпе войскăсем çак иртнĕ çапăçусенче — нимĕçсем çулла наступлени туса яланах ăнăçу тăваççĕ, совет войскисен вара ирĕксĕрех каялла чакма лекет тесе калакан юмаха тăрă шыв çине кăларчĕç, — тет Василенко юлташ савăннипе хумханса, çулпуçăн приказĕнчи сăмахсене тепĕр хут аса илсе.

Завод коллективĕ кировецсен чĕнĕвне сӳтсе-явнă хыççăн ик-виçĕ кун каярах çĕç çĕнĕ обязательствăсем илнĕччĕ. Çулпуçăн приказĕпе хавхаланса, Хĕрлĕ ялавлă завод коллективĕ вăл обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçлассишĕн ытларах вăй хурса ĕçлеме пулни çинчен пĕлтерет.

Уйăхри плана 10 кун малтан тултарнă

КУСЛАВККА. (Телефонпа). Райпромкомбинат коллективĕ июль уйăхĕнчи производство программине июлĕн 20-мĕшĕ тĕлне пурнăçланă. Урапасем тăвакан мастер 63 çулхи Дмитриев, шлатник Краснов юлташсем ĕç нормине куллен икĕ хут тултарса ĕçлеççĕ. Çĕвĕ çĕлекен цехри Чернышева юлташ задание 150—200 процент тултарса пырать.

Халĕ райпромкомбинат коллективĕ иккĕмĕш çурçул планне декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлет.

И. ШАРКОВ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР-ĕнчи халăх сывлăхне сыхлас ĕçре уйрăмах палăрнă работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Совет çĕршывĕнчи сывлăха сыхлас ĕç 25 çул туллнă май, халăх сывлăхне сыхлас ĕçре тухăçлăн ĕçленĕшĕн тата пахă çитĕнÿсем тунăшăн Чăваш республикинчи уйрăмах палăрнă медицина работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Николай Николаевич Алексеев — Чăвашсен трахоматознăй институтĕнчи врача-окулиста.

2. Олимпиада Федоровна Алексеевăна — Шупашкарти ача çуратмалли çуртри акушеркăна.

3. Ананий Иванович Ананьева — эвакогоспиталь начальникне.

4. Клавдия Александровна Арзамасовăна — ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула совет исполкомĕн сывлăха сыхлав отделĕн заведующине.

5. Людмила Михайловна Архангельскаяна — Çĕмĕрле хулинчи куç больницин заведующине.

6. Анфиса Никитична Башкировăна — Етĕрне районĕнчи РОКК комитечĕн председательне.

7. Надежда Петровна Березинана — Улатăрти пĕчĕк ачасен çуртĕн директорне.

8. Евдокия Тихоновна Бойковăна — пĕр эвакогоспиталĕн санитаркине.

9. Шаммизиган Шарифзяновна Валиуллинăна — Иккĕмĕш Чкаловски больницăри фельдшерицăна.

10. Павел Васильевич Васильева — ĕççынни депутачĕсен Шупашкар район совет исполкомĕн сывлăха сыхлав отделĕн заведующине.

11. Серафима Ивановна Волгинăна — эвакогоспиталь начальникне.

12. Татьяна Сергеевна Воробьевăна — Канаш районĕнчи Сиккасси участокĕнчи больницăн заведующине.

13. Александр Иршархович Воронова — Шупашкар больницин дифтери отделенийĕн заведующине.

14. Васса Федоровна Горбуновăна — Улатăр больницинчи санитаркăна.

15. Людмила Трофимовна Грачевăна — Медсантруд союзĕн Обком председательне.

16. Эхиэль Бенимарович Гриншпунта — эвакогоспиталь начальникне.

17. Анна Дементьевна Демановăна — Шупашкар хулинчи иккĕмĕш номерлĕ сĕт кухнинчи сестрана.

18. Пелагея Сергеевна Дракинăна — Çĕмĕрлери пĕчĕк ачасен çуртĕн заведующине.

19. Иван Данилович Ефимова — Çĕрпÿ районĕнчи Хурăнсурти фельдшер пункчĕн заведующине.

20. Фаина Петровна Засыпкинăна — Шупашкарти ача-пăча поликлиникин заведующине.

21. Валентина Алексеевна Ивановăна — Шупашкар поликлиникинчи лаборатори заведующине.

22. Анастасия Ивановна Ивановăна — Шупашкарти юн яракан станцинчи санитаркăна-автоклавщицăна.

23. Мария Ильинична Ильинăна — Шупашкарти трахоматознăй институт амбулаторийĕн старши медсестрине.

24. Аристарх Михайлович Кадкина — пĕр эвакогоспиталь начальникĕн политика енĕпе ĕçлекен заместительне.

25. Алексей Борисович Капитонова — Главнăй аптекоуправленин Чăваш республикинчи отделенийĕн химипе фармацевт лабораторийĕн директорне.

26. Клавдия Степановна Киселевăна — Куславкка районĕнчи Мушарти трахоматознăй пунктăн заведующине.

27. Тимофей Дмитриевич Козина — Çĕмĕрле районĕнчи фельдшера-пенсионера.

28. Александра Михайловна Козловăна — Шупашкар больницинчи инфекционнăй отделенин фельдшерицине.

29. Валентина Александровна Колесниковăна — Çĕмĕрле больницинчи операцисем тунă çĕрте ĕçлекен медицина сестрине.

30. Вера Гавриловна Кузнецовăна — пĕр заводри медицинăна санитари пайĕн начальникне.

31. Алевтина Павловна Кудрявцевăна — Канаш-ри механизациленĕ вăрман пунктĕнчи 5-мĕш номерлĕ ача яслин заведующине.

32. Алексей Ильич Лихачева — Чăваш АССР сывлăха сыхлав халăх комиссарне.

33. Олимпиада Николаевна Логинова — Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ аптекăн посудницине.

34. Нина Николаевна Лупповăна — Чăвашсен республикăри санитарипе эпидемиологи станцин директорне.

35. Мария Семеновна Миролюбовăна — пĕр эвакогоспитальри медицина отделенин начальникне.

36. Михаил Григорьевич Мичурина — 7/8 номерлĕ вăрман заводĕнчи фельдшер пункчĕн заведующине.

37. Клавдия Ивановна Мочаловăна — Куславкка районĕнчи Карач больницин медицина сестрине.

38. Клавдия Ивановна Мочаловăна — пĕр эвакогоспиталĕн медицина сестрине.

39. Павел Федорович Наумова — Шупашкар поликлиникинчи хирурги отделенийĕн заведующине.

40. Любовь Ивановна Николаевăна — пĕр эвакогоспитальри операцисем тунă çĕрте ĕçлекен сестрана.

41. Марфа Николаевна Николаевăна — Йĕпреç районĕнчи трахоматознăй сестрана.

42. Панна Павловна Николаевăна — пĕр эвакогоспиталĕн медицина отделенийĕн начальникне.

43. Ольга Николаевна Николаевăна — Октябрьски больницинчи акушеркăна.

44. Иван Пантелеймонович Никоненкона — пĕр эвакогоспитальри медицина енĕпе ĕçлекен начальникĕн помощникне тата хирурга.

45. Мария Семеновна Павловăна — Октябрьски районри Кутемерти трахоматознăй сестрана.

46. Сарра Леонидовна Пивника — Улатăрти юн яракан пунктри операци тунă çĕрте ĕçлекен сестрана.

47. Борис Алексеевич Покровскине — Главнăй аптекоуправленин Чăваш республикинчи отделенийĕн управляющине.

48. Анна Романовна Романовăна — Шупашкарти ача çуратмалли çуртри санитаркăна.

49. Самуил Юдкович Рутштейна — пĕр эвакогоспиталĕн тĕп хирургне.

50. Анастасия Владимировна Савельевăна — ĕççынни депутачĕсен Улатăр райсовет исполкомĕн сывлăха сыхлав отделĕн заведующине.

51. Ефим Семенович Семенова — пĕр эвакогоспиталь начальникĕн политика енĕпе ĕçлекен заместительне.

52. Серафима Семеновна Смирновăна — Шупашкарти юн яракан станцин старши медсестрине.

53. Николай Семенович Соколова — пĕр эвакогоспиталь начальникне.

54. Алексей Николаевич Тагунова — пĕр эвакогоспиталĕн тĕп хирургне.

55. Михаил Григорьевич Титова — Чăваш АССР-чи суд медицинин экспертне.

56. Наталья Федоровна Уськинăна — Çĕмĕрле больницинчи фельдшерицăна.

57. Александр Семенович Уфукова — Чкаловски районри эпидемиолога.

58. Мария Васильевна Хоняевăна — Çĕмĕрле больницинчи хирурга.

59. Ксения Ивановна Широковăна — Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн санитари пайĕн начальникне.

60. Антонина Зиновьевна Шульпенковăна — Чăвашсен трахоматознăй институчĕн директорне.

61. Юлия Прокопьевна Юнусовăна — Елчĕк районĕнчи госсанинспектора.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулхи июлĕн 24-мĕшĕ.

Фронтовиксен ачисем çине чунсăрла пăхакансем

Пирĕн гварди чаçĕнчи красноармеец Павел Михайлов нумаях пулмасть боецсем пĕлне хуçакан çыру илчĕ. Ăна Йĕпреç районĕнчи Кировски ялсовет исполкомĕн председателĕ Уткина алă пусса, пичет хурсах çирĕплетнĕ. Çав çырура çапла каланă:

«Эконом поселок çыннине П. Михайлова. 1943 çулти июнĕн 24-мĕшĕнче сирĕн аннăр, Михайлова Мария Павловна, лаша пăхса пурăннăскер, лаша тапнине вилсе кайрĕ. Халăхи вăхăтра килте сирĕн 1940 çулта çуралнă Михайлов Эрикпе 1942 çулта çуралнă Михайлов Коля çеç пурăнаççĕ. Вĕсене никам та пăхакан çук. Çавăнпа сире Кировски ялсовет васкавлăн киле таврăнма, хăвăр ачусене ăçта та пулин пурăнмашкăн вырнаçтарма хушать. Кировски ялсовет председателĕ Уткина. Секретарĕ (алă пуснă)».

Çак çыру Кировски ялсоветĕ çар çыннисен çемьисене пулăшма шухăшламаннине çеç мар, вĕсем çине пăчах ответсăрла пăхнине кăтартать. Çакăн пек «тăрăнни» хальхи вăхăтра боецăн çапăçури хастарлăхне ÿкерет. Халь фронтра кашни боец кирлĕ.

Кировски ялсоветĕ боеца чĕнсе илмесĕрех ун ачисене лайăх усрама пултарассине эпир пĕлетпĕр. Кировски ялсоветĕн руководителĕсен фронтовика унăн ачисене лайăх усрани çинчен пĕлтермеллеччĕ, вара Михайлов красноармецăн хуйхи нумай пĕчĕкленнĕ пулĕччĕ, унăн хастарлăхĕ ÿснĕ пулĕччĕ.

Çак бюрократла шухăшсене Кировски ялсовет исполкомĕн халех пăрахмалла. Михайлов фронтовик ачисене лайăх пăхса усрас пирки тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

А. БАЛОД,
Командирăн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ.

Тăван çĕршывăн интересне çÿлте тытар тырпулсене тăккаламасăр пухса кĕртер!

„Правда“ колхозра

КУСЛАВККА, июлĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). Партипе правительство «1943 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление тĕпе хурса, «Правда» колхоз членĕсем халĕ уйхирте хастарлăн ĕçлеççĕ. Висĕ талăк хушшинче вĕсем 50 гектар çинчи тырра выроа пухрĕç.

«Правда» колхоз правленийĕ тырă вырма тухнă май чи малтан ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пымалли майсене шута илчĕ. Пĕтĕм ĕçе бригадăсенче организациленĕ звеносем урлă туса пымалла турĕ. Çакăнпа пĕрлех тата ĕç нормисене куллен ирттерсе тултаракансене çийĕнчех хушса тÿлес йĕркене малти вырăна лартрĕ.

Уборка ĕçĕсене çапла йĕркелени паха результатсем парать. Хирте кулленех 170 колхозник ĕçлет. Кашни звено—хайĕн участокĕнче, кашни колхозница—хайне уйăрса панă каçалăх умĕнче. Ăмăрту кунран кунах вăйлански пырать. Звеноводсем кулленех кашни колхозникĕн ĕçне уйрăммăн шута илеççĕ, вăл сведенисене бригадирсене парса тăраççĕ. Çапла вара колхоз правленийĕ кункаçиччен тунă ĕçсен результачĕсене каçхине пăхса тухса пĕтĕçтерет те тепĕр ирхине вĕсене звеносем патне çитерет.

Нормăран ирттерсе ĕçлекенсене икĕ хут ÿстерсе тÿлемелли йĕркене те кунта тĕрĕс пурнăçласа пыраççĕ. Çакă вăл ĕç тухăçлăхне ÿстермелли май пулса тăчĕ. Тунă ĕçе вăхăтра тĕрĕс шута илсе пыни тата ĕçшĕн хушса тÿлесси колхозниксен ĕçлес хастарлăхне вăйлатрĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех ырашь вырнă çĕрте нормăна тултармасăр ĕçлекенсем пачах юлмарĕç. Ăмăртса ĕçлесси вăйлăн сарăлчĕ.

Кашни звено (10 çын) кунне пĕрер гектар тырă вырмалла пулсан, 5-мĕш бригадăри пĕрремĕш звено (ку звенора 8 колхозница) июлĕн 22-мĕшĕнче пĕр гектар ытла вырчĕ. Вĕсем хушшинче Ю. Гладкова, Ф. Хорькова, Т. Гладкова колхозницăсем хăйсене уйрăмах палăртрĕç. Вĕсем çак кун 5-шер ĕçкунĕ ĕçлесе илчĕç. Çавăн пекех 1-мĕш бригадăри звеносенче те М. Сотникова, М. Мотова, Белова, Алексеева кулленхи ĕç нормисене икĕ хут ытла ирттерсе тултараççĕ. Кунне 5—6 ĕçкунĕ ĕçлесе илеççĕ.

— Фронтра Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене çĕмĕрсе малалла куçса пырать. Эпир Хĕрлĕ Çар боецĕсене, фронтри тăвансене колхозра кулленех ывăнма пĕлмесĕр ĕçленипе ответлетпĕр,—теççĕ колхозница патриоткăсем.

«Правда» колхозра пионерсем те пурте уйра ĕçлеççĕ. Вĕсен отрячĕн ĕç участокĕ те уйрăм. Вĕсен ĕçĕсене Дергачева, Рожнова, Поленова учительницăсем ертсе пыраççĕ. Иртнĕ икĕ кун хушшинче шкул отрячĕ пир пулнă пăрçана çулса пухрĕ. Çамрăк ачасемех вăй-питти колхозниксенчен кая мар ĕçлерĕç. 10 гектар çинчи пăрçана пĕр тăккаламасăр çулса пухрĕç.

А. ШАРКОВ.

Кашни колхозник хĕрÿ ĕçре

ВĂРМАР, июлĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). «Хĕрлĕ Шентах» колхоз июлĕн 22-мĕшĕнче пĕр кун хушшинче 42 гектар тырă вырса пухрĕ. Кунта колхозниксем ĕçе тул çуталнă-çуталманах тухса тĕттĕм пулса çитиччен ĕçлеççĕ. Бригадăсенче ĕç йĕрки тата дисциплина çирĕп. Ĕçлеме пултаракан кашни çын кулленех ĕçе кая юлмасăр тухать. 4 бригадăра 4 жнейка, вĕсемпе талăкра 14 сехетрен кая мар тырă выраççĕ. Ĕçре фронтовиксен арăмĕсем паха ĕçленипе палăрса тăраççĕ. А. Федорова звени (ку звенора пурте фронтовиксен арăмĕсем) ĕç нормине куллекех икĕ хут ирттерсе тултарать.

Калинин ячĕпе тăракан колхозра та çавăн пекех уборка ĕçĕсем хăвăрт та организованно пулса пыраççĕ. Талăкра 35—40-шер гектар тырă выраççĕ, жнейкăсемпе туллин усă кураççĕ. «Коминтерн» колхозра та колхозниксем пурте уйра ĕçлеççĕ.

И. СТЕПАНОВ.

Государствăна утă парса татман

СĔРПУ. (Телефонпа). Район государствăна утă парас ĕçре юлса пырать. 113 колхозран 18-шĕ кăна плана тултарнă. Государствăна 6.093 центнер утă памалла пулсан, июлĕн 21-мĕшĕ тĕлне мĕнпурĕ те 2.202 центнер кăна хатĕрлев пунктне леçнĕ.

Уйрăмăнах «Красный бригадир», «Ĕмĕт» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем çак ĕçе вăраха хăварса пыраççĕ. Юлса пыракан колхозсен лайăх ĕçлекен колхозсенчен пример илсе, ĕçе хăвăртлатмалла.

А. ЕГОРОВА.

Пропагандăпа агитаци тата çутĕç работникĕсен республикăри канашлăвĕ

Çак кунсенче Шупашкарта ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен пропагандăпа агитаци пайĕсен заведующийĕсен, ялсенчи хăшпĕр агитколлектив руководителĕсен тата избачсен канашлăвĕ пулчĕ.

Канашлура ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци енĕпе ĕçлекен секретарĕ М. А. Андреев юлташ «Ялти ĕççыннисем хушшинчи массăллă-политикăллă ĕç çинчен» доклад турĕ.

Канашлу ĕçĕсене ВКП(б) Обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Чарыков, ВКП(б) Центральный Комитечĕн лекторĕ А. С. Ханухов юлташсем хутшăнчĕç.

Докладчик ĕççыннисем хушшинчи массăллă-политикăллă ĕçе мĕнле йĕркелемелли çинчен тĕплĕн чарăнса тăчĕ.

Андреев юлташăн докладĕ хыççăн Трофимов (Элĕк), Куликов (Сĕтĕрвăрри), Медведев (Наркомпрос), Сарра (Çĕмĕрле), Романов (Елчĕк), Даров (Тăвай), Иванова (Йĕпреç), Платонов (МОПР Обкомĕ), Волкова (Шупашкар районĕ), Иванов (Канаш хули), Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ Макаров юлташсем тухса каларĕç.

ВКП(б) Центральный Комитечĕн лекторĕ А. С. Ханухов юлташ пропагандăпа агитаци ĕçне лайăхлатмалли майсем çинчен тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Вăл ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен пропагандăпа агитаци пайĕсен заведующийĕсем тата агитколлективсен руководителĕсемпе избачсем умне черетри конкретнăй задачăсене лартрĕ.

Канашлу вĕçленес умĕн ВКП(б) Обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Чарыков юлташ пысăк сăмах тухса каларĕ.

Чарыков юлташ, чи малтанах, республикăра çураки вăхăтĕнче тата уборкăна хатĕрленĕ тапхăрта массăллă-политикăллă ĕçе мĕнле йĕркелени çинчен каласа пачĕ. Массăллă-политикăллă ĕçе хуçалăхри задачăсемпе тачăн çыхăнтарса туса пынипе, малта пыракан районсем, республикăри çĕршер колхозсем çуракине вăхăтра тата агротехникăлла кĕске срoксенче ирттернĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, Чăваш республики çураки планне иртнĕ çулхинчен чылай хăвăртрах пурнăçа кĕртнĕ.

Анчах çураки хыççăн хăшпĕр районсенче массăллă-политикăллă ĕç сÿрĕкленнĕ. Ку вăл хăшпĕр ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен пропагандăпа агитаци пайĕсем тата вĕсен заведующийĕсем тунă çитĕнÿсемпе лăпланса ларма пăхнинчен килнĕ.

— Массăллă-политикăллă ĕçре сезонлăх пулма тивĕçлĕ мар,—тет Чарыков юлташ.—Ял ĕççыннийĕсем тăван çĕршыври тата тĕнчери лару-тăру çинчен, отечественнăй аслă вăрçă хирĕнчи геройла ĕçсем çинчен вăхăтра тата тĕплĕн пĕлсе тăччăр. Витĕмлĕ те тĕрĕс туса пыракан большевикла агитаци ялсенче пурăнакан кашни ĕççынние нимĕç вăрă-хурахĕсене хăвăртрах çĕнтересси шĕн мĕнпур вăя хурса кĕрешме, тăван çĕршыва пур енчен те вăйлăн пулăшса тăма мобилизацилемелле.

Уборка вăхăтĕнче ялти массăллă-политикăллă ĕçе тĕпрен вăйлатмалла. Кун пирки ВКП(б) Центральный Комитечĕ питех те усçăн кăтартса пачĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи ăнса çитĕннĕ тырпула пĕр тăкаксăр, кĕске срокрах пухса кĕртес, государствăна тырă тăратас ĕçсен ăнăçлăхне шăпах массăллă-политикăллă ĕçе тĕрĕс организацилени татса парать.

Вăрçа пула, кăçал тырпулсене халичченхинчен сахалтарах вăйсемпе пухса кĕртме лекет. Кунсăр пуçне тырă вырнипе пĕр вăхăтрах хуçалăхри ытти ĕçсене те пурнăçа кĕртес пулать. Пирĕн агитаторсемпе пропагандистсен ял ĕççыннийĕсене çакăн çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла.

Чарыков юлташ малалла агитаторсене тĕрĕс тупса палăртасси, вĕсене вĕрентсе çитĕнтересси, массăллă-политикăллă ĕçе конкретно та витĕмлĕ тăвасси, çак ĕçре мĕнпур формăсемпе усă курасси, калаçусемпе докладсен тата лекцисен пахалăхне тĕпрен лайăхлатасси çинчен чарăнса тăрать. Вăл ку ĕçри çитĕнÿсемпе çитменлĕхсене нумай тĕслĕхсемпе çирĕплетсе парать.

— Республика ялхуçалăх çулĕн чи йывăр та ответлă тапхăрне кĕчĕ,—тет юлашкинчен Чарыков юлташ. Вăл ялти массăллă-политикăллă ĕçе ВКП(б) Центральный Комитечĕ кăтартса панă пек тĕрĕс организацилесе, тырпулсене пухса кĕртес тата государство умĕнчи парăмсене татас ĕçсене срокра пурнăçласшăн, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухассишĕн, Оборона Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне хамăр республикăрах хăварассишĕн тата Пĕтĕм Союзри пĕрремĕш премие илме тивĕçлĕ пулассишĕн мĕнпур вăя хурса кĕрешме чĕнчĕ.

Ют çĕршывсенче

Муссолини отставкăна тухни

Итали королĕ Муссолини вырăнне Бадольо маршала лартнă

ЛОНДОН, июлĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Римри радио панă хыпарсем тăрăх, Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Муссолини отставкине Итали королĕ Виктор Эммануил йышăннă.

Римри радио хыпарĕсем тăрăх Муссолини вырăнне Бадольо маршала лартнă.

Итали королĕ тата Бадольо чĕнсе калани

ЛОНДОН, июлĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян каçхине Римри радио Виктор Эммануил король тата Бадольо маршал итальянецсене чĕнсе каланă.

Король чĕнĕвĕнче çапла каланă: паянтан пуçласа пĕтĕм хĕçпăшаллă вăйсен командованине король хăй çине илет. Хăйĕн чĕнĕвĕнче король çакна кăтартса панă: Италие йывăр сурансем кÿнĕ, анчах та король «Итали çĕнĕрен сывалса вăйлăланмалли çул тупасса» шанса тăрать, тенĕ. Король чĕнсе калани çине Бадольо та алă пуснă.

Италин çĕнĕ премьер-министрĕн Бадольо чĕнĕвĕнче çапла каланă: вăл король приказĕ тăрăх, çĕршывăн военнăй управленине хăй çине илнĕ тата мĕнпур власть та пĕтĕмĕшпех унăн аллинче тăрать. Бадольо чĕнĕвĕнче ыттисемпе пĕрлех «вăрçă малалла пырать» тесе калани те пур.

* * *

Пьетро Бадольо 1871 çулта çуралнă, Туринри çар шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Абиссинипе хирĕç 1895—1896 çулсенче вăрçнă чухне артиллери офицерĕ пулнă. 1912 çулта Италипе Турци вăрçинче пулнă. 1914—1918 çулсенчи вăрçăра Итали çарĕнче ертсе пыракан, вырăнсене йышăнса тăнă, вăрçă пĕтес умĕн ăна арми генералĕн чинне панă. 1914—1918 çулсенчи вăрçă пĕтсен, ăна тин çĕр çинчи вăйсен штабĕн начальникне лартнă, унта вăл 1921 çулччен ĕçленĕ. Влаçа фашистсем ярса илнĕ хыççăн 1922 çулта ăна çарти ĕçрен кăларнă, вара вăл дипломатилле вырăнсенче чылай ĕçленĕ. 1925 çулта Бадольона каллех çарта ĕçлеме илнĕ. Ăна хĕçпăшаллă вăйсен генеральнăй штабĕн начальникне лартнă, маршал чинне панă. 1928 çултан пуçласа 1933 çула çитиччен вăл Ливи губернаторĕ пулнă. Итали Абиссинине тапăннă вăхăтра, де Боно генерал отставкăна тухнă хыççăн, Бадольо Италин Абиссинири хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ пулнă. Абиссинине тытса илсен ăна Абиссинин вице-королĕ туса хунă. 1936 çулта ăна вице-король обязанноçĕсенчен хăтарнă. 1939 çулта Бадольона Италин хĕçпăшаллă вăйĕсен генеральнăй штабĕн начальникне лартнă. 1940 çулта ăна отставкăна кăларнă, мĕншĕн тесен вăл Итали войскисем Греци çĕршывне кĕрсе каясси хирĕç, тăнă текен хыпарсем сарăлнă. 1943 çулхи май уйăхĕнче ăна Кăнтăрти Итали çарĕсен главнокомандующине лартнă. Ют çĕршывсенчи хаçат-журналсем Виктор Эммануил корольпе Бадольо питĕ çывăх тăнине темиçе хутчен те палăртса кăтарнă. Муссолини политикипе Бадольо пĕрре те килĕнĕменни çинчен çырнă.

Италире фашизма хирĕçле демонстрацисем пулса иртнĕ

ЛОНДОН, июлĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Италири темиçе хулара фашистсен режимне хирĕçле демонстрацисем пулса иртнĕ. Мессинăра, Реджо-ди Калабрире тата Флоренцире вăрçа хирĕçле демонстрацисем пулса иртнĕ. Фашистсен влаçĕсем панă приказ тăрăх Комора пысăк парад туса ирттернĕ. Парада фашистсен партин пур членĕсем те фашистсен значокне çакса пымалла пулнă. Юлашки вăхăтра фашистсен партин членĕсем нумайĕшĕ парти значокне çакса çÿреме пăрахнă, çавăн пирки ĕнтĕ çав приказа панă та. Парада пыман фашистсене пурне те фашистсен партинчен кăларнă.

Сицилири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри штабĕ çапла пĕлтерет: Катаниерен кăнтăрарахра тăшман ăна хĕсекен акăлчансен 8-мĕш армийĕпе хаяррăн хирĕç тăрса çапăçать.

Америка войскисем çавăн пекех Сицили утравĕн хĕвеланăç пайне хирĕç тăракан тăшманран тасатаççĕ. 7-мĕш арми тыткăна нумай илнĕ, çавăн пекех тата хĕçпăшал нумай тытса илнĕ.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: алла илнĕ даннăйсем тăрăх, Сицилин хĕвеланăç пайĕнче американецсен войскисем Палермо патнелле куçса пынă чухне тăшман салтакĕсене 45.000 çынна татса хăварнă. Алжирти радио пĕлтернĕ тăрăх, Палермăна илнĕ американецсен войскисем çакна асăрханă: хулари çар сооруженийĕсене тăшман пĕрне те çĕмĕрме ĕлкĕреймен.

Аугустăри тинĕс базин командующине Итали адмиралне Леонара тыткăна илнĕ.

ЛОНДОН, июлĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, тăшманăн Сицилин хĕвеланăç пайĕнчи пур аэродромĕсене те союзниксем е тытса илнĕ, е çĕмĕрсе юрăхсăра кăларнă. Çыранри çула Палермăран нумай хĕвеланăçнерехре татнă. Палермăран 20 миля хĕвелтухăçнерехри Термини портне тытса илнĕ. Тăшман ку районра питĕ вăйсăр хирĕç тăрать.

Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Сицилин хĕвеланăç пайĕнче вăрçă ĕçĕсем вĕçленсе пыраççĕ. Халĕ кунта тăшман войскисене пусĕпех пĕтерсе тăкмалли операцисем пыраççĕ. Тăшманăн çак чаçĕсене çĕмĕреççĕ: çыранри 202-мĕшпе 208-мĕш дивизисене тата „Аоста“ ятлă 25-мĕш дивизие.

Лондонра илнĕ хыпарсем тăрăх, Палермăна хÿтĕлеме хушнă „чернорубашечниксен легионĕ“ тыткăна паранна.

Акăлчансен 8-мĕш армин фронтĕнче тăшман вăйлăн хирĕç тăрать.

Канада войскисем хаяррăн çапăçса ăнăçлăн малалла куçса пыраççĕ.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

Англипе Греци авиацийĕ Крит утравне тапăнни. Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнчи операцисем

ЛОНДОН, июлĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: ĕнер кăнтăрла Англипе Греци авиацийĕн пысăк соединенийĕсем тăшманăн Крит утравĕ çинчи войскисемпе сооруженийĕсем çине вăйлăн тапăнса бомбăсем пăрахнă. Боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă. Союзниксен авиацийĕ тăшманăн лагерĕсене, артиллери позицийĕсене, автомашинисемпе повозкисене атакăланă. Иэрапетрора тата Гераклионра вырнаçса тăракан заводсене бомбăсем тÿрĕ лекнине палăртнă.

Ĕнер союзниксен авиацийĕ, Италин Аквинори тата Кротонри аэродромĕсем çине татах вĕçсе пыра-пыра тапăнса, бомбăсем пăрахнă. Йывăр бомбардировщиксем Ливорнăна атакăланă. Бомбăсем об"ектсен районĕнче çурăла-çурăла кайнă.

ЛОНДОН, июлĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер кăнтăрла американецсен йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Норвеги пункчĕсенчен пĕринче вырнаçса тăракан алюмини заводне тата Тронхеймри подводнăй лодкăсем юсамалли базăна тапăннă. Нумай çĕрте пушарсем тухнине тата взрывсем нумай пулнине палăртнă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 17 истребительне пĕтерсе тăкнă. Американецсен пĕр бомбардировщикĕ хăйĕн базине таврăнман.

Англи авиацийĕн питĕ пысăк соединенийĕсем июлĕн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Гамбурга хаяррăн тапăннă. Хула çине 2000 тонна ытла бомба пăрахнă. Ку операцирен 12 самолет каялла таврăнман.

Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнче союзниксен авиацийĕ çаплах Итали аэродромĕсемпе чугунçулсене атакăланă. Чугунçул линийĕсене, унти вагонсемпе паровозсене тата ремонтнăй мастерскойсене чылай сиен кÿнĕ.

Тăшманăн Сицили гаванĕсенче тăракан суднисенчен нумайĕшĕ çине бомбăсем пăрахнă. Темиçе суту-илÿ пароходне тата 3 çар карапне бомбăсем тÿрремĕнех лекнине палăртнă. Тиррենски тинĕсре тăшманăн икĕ пысăк мар суднине путарнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

САРАТОВРИ КОНСЕРВАТОРИ ÇУМĔНЧИ ЧĂВАШСЕН ОПЕРНĂЙ СТУДИНЕ

кĕрес текенсен заявленийĕсене сентябрĕн 1-мĕшĕччен илеççĕ. Испытанисем сентябрĕн 5-7-мĕш числисенче Шупашкарта пулаççĕ.

Адрес çапла: гор. Чебоксары, ул. Герцена, 9, Управление по делам искусств при Совнаркоме Чувашской АССР.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 756 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. 6. 53 84 п. л.